# «СЕНКЕР ИНÇЕТ» ШКУЛ АЧИСЕН ОЛИМПИАДИ

## ЧĂВАШ ЧĔЛХИПЕ ЛИТЕРАТУРИ (чăваш шкулĕсем)
**8-9 кл.**

ПĔТĔМЛЕТŸ ТАПХĂРĔН ЫЙТĂВĔСЕМ

1. ***Сенкер*** паллă ятне танлаштару степенĕнчи палăрту форминче, нумайлă хисепре, камăнлăх падежĕнче çырăр.

2. *Кăнтăрла тĕлĕнче Шуркаса хура ăйăр кӳлнĕ тăрантас çеç килсе кайрĕ.*

Панă тĕслĕх хăш ыйтăвăн хуравĕ пулать?

1) Хура ăйăр кӳлнĕ тăрантас Шуркаса хăçан килсе кайрĕ?
2) Кăнтăрла тĕлĕнче хура ăйăр кӳлнĕ тăрантас ăçта килсе кайрĕ?
3) Кăнтăрла тĕлĕнче Шуркаса мĕн килсе кайрĕ?
4) Кăнтăрла тĕлĕнче хура ăйăр кӳлнĕ тăрантас мĕн турĕ?

3. Чи анлă ят сăмах майлашăвне çырса илĕр те тĕп компонентне палăртăр.

*Аллă тăваттăра пыракан Увар Кузьмич костюмăн малти пĕчĕк кĕсйинчен шăмă турине кăларать те çӳçне якатма пуçлать.*

4. Вырăсла куçарăр: *сар çу, сар çип ути.*

5. Хутлă предложени тĕсне палăртăр, хутсăр предложенисем мĕнле мелпе çыхăннине калăр.

*Халăх шавланине илтсен эпĕ те урамалла тухрăм.*

6. Мĕн вăл водевиль?

7. Чăвашсем пĕлен-паллан çынна тĕл пулсан: «Ăçта каян?», – тесе ыйтаççĕ. Çак йăла сывлăх суннипе пĕр тан теççĕ. Асăннă шухăш чăваш сăвăçин хайлавĕнче те ӳкереннĕ. Хайлав ятне, авторне аса илĕр.

8. Çак çыравçăна «Пултаруллă тухтăр, чăтăмлă салтак, талантлă юптаруçă» тесе хакласçĕ. Кам пирки сăмах пырать-ши?

9. Сăвă виçине, карт шутне палăртăр:

*Пирĕн ял çыннисем тăшмана парăнман,*
*Çĕнтермесĕр нихçан каялла таврăнман.*
*Ят ан ярччĕ, ачам, хамăр ялăн ятне,*
*Сӳнтерсемччĕ, ачам, çичĕ ютăн вутне…*

10. «Этем ырă ĕçĕпе» темăпа сочинени-шухăшлав çырăр, чăваш литературинчи тĕслĕхпе çирĕплетĕр.